Ял тăрăхĕсен кунĕсенчен

Халăхпа татса пама тăрăшаççĕ

Ял тăрăхĕсен кунĕсем районта вĕçленсе пыраççĕ. Икĕ эрне ытла тăсăлакан асăннă мероприяти мĕн çинчен калать-ха? Районта пурăнакансем çакнашкал тĕл пулусене кĕтеççĕ. Вĕсенче ялта пурăнакансем чуна хумхантаракан ыйтусене çĕклеççĕ. Иртнĕ эрне кун пулнă Ярославка ял тăрăхĕн кунĕнче те çаплах пулчĕ. Вырăнти проблемăсене ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г. В. Пайгусов хăй те пытармарĕ. Ачасен йышĕ чакнипе Чемейри ачасене Нискасси шкулне турттараççĕ. Кунта та ачасен йышĕ шкулта вĕрентме май пур йышран чылай сахалтарах. Григорий Валентиновач Чемейре пурăнакансене халăха пĕтĕçтерсе тăракан центрсăр хăварма май çуккине палăртни ял тăрăхĕ халăхăн нуши-терчĕпе пĕрле пурăннине кăтартса парать. Чемей шкулĕн çуртĕнче малашне клуб, библиотека, музей пуласса ĕмĕтленеççĕ çеç мар, çапла тăвас тесе ĕçлеççĕ те.

Ял хуçалăх, пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх объекчĕсене, вĕрентӳ, культура, сывлăха сыхлас ĕç учрежденийĕсене çитсе кунти ĕç коллективĕсемпе тĕл пулни те Ярославка тăрăхĕнче пурăнакансем малаллах туртăннине кăтартса параççĕ. Нимĕнпе кăсăкланман çынна çеç нимĕнле ыйтусем те интереслентермеççĕ пек туйăнать. Нискассисемпе кӳршĕ ялсене вара килрен киле эрех сутакансем хунасах пыни те шухăшлаттарать. Кунтан ытла вĕсем çын куççӳлĕ çинче укçа çапакансене тупса палăртас ĕçрен айккинче юлманни, кӳршĕсен хуйхи-суйхине чуна çывăх илни лăплантарать. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ пĕлтернĕ тăрăх, иртнĕ çул çакăн йышшисем пирки 12 протокол çырнă. Районти шалти ĕçсен пайĕн ĕçченĕсемпе пĕрле ял тăрăхĕн представителĕсем пĕрле тухсан, каçхи çакнашкал рейд пĕрре те пушшăн вĕçленмен. Кăçал ку тĕлĕшпе тата та тачăрах çыхăнса ĕçлеме тĕллев лартаççĕ Ярославкăçем.

Ĕç коллективĕсенче иртнĕ тĕл пулусенче ашшĕ-амăшĕн пăшăрханăвĕ палăрчĕ: районти çар комиссариатне кайсан, çамрăксем ачасенчен хăратса укçа ыйтнă тĕслĕхсем тĕл пулма пуçлани палăрнă. Районти шалти ĕçсен пайĕн ĕçченĕсем ку ыйтупа ĕçлессине шантарчĕç.

Çамрăксем тенĕрен, Ярославка тăрăхĕнчисем те вырăнта йĕркене пăснă тĕслĕхсем пур. Каçхине нумай хваттерлĕ çуртсен подъезчĕсене пуçтарăнса, кантăка ватнă тĕслĕхсем пĕрре кăна мар пулнă. Апла пулсан ашшĕ-амăшĕсен те ирĕклĕ халăх дружинин ĕçне активлăрах хутшăнни вырăнлă пулмалла.

Ял тăрăхĕ çумĕнчи профилактика канашĕ кунта ĕçлемест тесе калас килмест, ларусене ăнăçсăр çемьесене, тӳрĕ çултан пăрăннисене чĕнсе пăхса тухаççĕ. Анчах та пирĕн хамăр ĕçленине кăтартма та пĕлмелле. Тивĕçлĕ протоколсене вăхăтра тата саккунпа килĕшӳллĕн çырмалла. Ку вăл пур ял тăрăхĕсене те пырса тивекен çитменлĕх.

Хăйсен ыйтăвĕсемпе килнисене ытти ял тăрăхĕсенче пурăнакансене хумхантаракан ыйтусемех канăç памаççĕ. Пенси, çăмăллăхсемпе çыхăннă ыйтусем çине тулли хуравсем илчĕç вĕсем. Нискассинчи пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕн кăнтăрлахи стационарĕнче выртакансене те районти тĕп больницăн тĕп врачĕн çумĕ А. П. Чиновникова çăмăллăхсене кура тивĕçекен эмелсемпе тивĕçтересси епле пулса пынипе тĕплĕн паллаштарчĕ. Магазина пынă çынсем те çак ыйтусен хуравĕсене пĕлчĕç.

Канăç паман ыйтусем тенĕрен, камăн мĕнле вĕсем. Ача сачĕн ĕçченĕсене çурт çийĕнчен шыв кайни тарăхтарать, ял çыннисене урамра йытăсем ирĕккĕн çӳрени те пăшăрхантарать тата ытти те.

Çакна вара тӳрех калама пулать: ял тăрăхĕн администрацийĕ халăхпа тачă çыхăнса ĕçлеме тăрăшни куçкĕретех. Хумхантаракан ыйтусене кунта пĕрле пуçтарăнса пăхса тухаççĕ. Халĕ, акă, ял пухăвĕсем иртме пуçланă. Иккĕшĕнче пулнă та ĕнтĕ вăл. Нумай-нумай ыйтусемпе пĕрле унта халăха флюорографи тĕрĕслевĕ витĕр тухни кашни çыншăн хăйĕншĕн усăллă пулни пирки ăнлантару ĕçĕсем те ирттереççĕ.

Кирек епле ĕçре те тӳрех ертсе пыракан çине пăхаççĕ. Ярославка ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г. В. Пайгусов, ав, килти хушма хуçалăха аталантарма 146 пин тенкĕлĕх паттшалăх пулăшăвне илчĕ. Ăна кура ку территоринче пурăнакансем те кредит илме шикленсе тăмарĕç: 36ăн усă курчĕç паттшалăх пулăшăвĕпе.

Татса паман ыйтусем Ярославкăсен те сахал мар. Преступлени тăвасси ӳссе кайни те (виçĕмçул 15, пĕлтĕр 25)вырăнти милицин участокри уполномоченнайĕпе пĕрле çанă тавăрса ĕçлемеллине пĕлтерет, ачисене эрехпе "улăштарнă" ашшĕ-амăшĕсем те çук мар тата ытти те. Ял хуçалăхĕнче те проблемăсем çителĕклех. Чи кирли вара – ял тăрăхĕнче çав проблемăсене пĕлнипе пĕрлех вĕсене татса памалли çулйĕре шырани. Апла пулсан шухăшланине пурнăçа кĕртеççех.

Л. ТУКТИНА.

Ыррине ытларах çул парасчĕ

Яланхи йĕркепе январĕн 26-мĕшĕнче Чуманкасси ял тăрăхĕн кунĕ пулса иртрĕ. Яваплă ĕçченсем Чапаев тата Чкалов яч. хис. хуçалăхсенче, ял тăрăхĕн территорийĕнчи экономика объекчĕсенче, суту-илӳ предприятийĕсенче, вĕрентӳ, культура тата сывлăха сыхлас ĕç учрежденийĕсенче, ăнăçсăр çемьесенче пулчĕç. Унти лару-тăрупа паллашрĕç.

Çав вăхăтрах Чуманкасси ял тăрăхĕн администраци çуртĕнче граждансене хăйсене хумхантаракан ыйтусемпе йышăнчĕç.

Чи малтан Чуманкасси шкулĕнче пултăмăр, унти ĕç-хĕлпе паллашрăмăр. Ку шкул вĕрентӳ пахалăхĕпе те, ытти енĕпе те лайăххисен шутĕнче. Çакăнта тĕслĕх илмелли те пур. Икĕвиçĕ çул каярах кунта пачах урăх ӳкерчĕк куç умне тухатчĕ. Халĕ, ертӳçĕ улшăннă май, çакăнти сăн-сăпат та пачах урăх. Вĕренекенсен йышĕ чакман, малтанхи шайрах.

Ял тăрăхĕнчи культура учрежденийĕсем те хăйсен ĕçне аван йĕркелесе пыраççĕ. Унта вăй хуракансем хуçалăх ĕçне хутшăнма тăрăшаççĕ, укçа ĕçлесе илме майсем тупаççĕ. Çĕнĕлĕхсене алла илни, вĕсемпе усă курма пĕлни те куç умĕнчех. Тĕслĕх библиотека уçăлни вара пуриншĕн те меллĕ. Кунта тăтăшах килсе çӳрекенсен хисепĕ те пысăк. Çитес вăхăтра Исетерккĕ ялĕнче тĕслĕх библиотека уçма палăртнă. Ана валли кунта чылай ĕç туса ирттернĕ, тирпей-илем кĕртнĕ.

Хамăр ĕçе тăснă май, Çĕньял Апаш ялне çитсе курма шутларăмăр. Унти Марина Витальевна Николаева çемйипе кăсăкланас терĕмĕр. Анчах та кил картине кĕрсен пирĕн ума кĕтмен ӳкерчĕк тухса сăнланчĕ. 3 ача амăшĕ çак урамри арçынна хаяр шĕвекпе хăналать иккен. Хыт шикленнĕскер, эрехе ĕçсе пĕтереймерĕ, юр çине сапрĕ. Çавă вара сăмакун шăршине сарăлма май пачĕ. Эпир ачасене курас тĕллевпе килнине пĕлтерсен, «Дом хозяин килте çук», - тесе алăка çеклетсе кĕчĕ, пире кĕртмерĕ. Урама тухсан, арçын 150 грамм (паллах, мĕн чухлине эпир пĕлме пултараймарăмăр) сăмакуна 10 тенкĕпе илнине пĕлтерчĕ. Çапла вара ял тăрăхĕнчи милицин участокри инспекторĕ А.Н. Николаев протокол çырчĕ. Çитес вăхăтрах иккĕшĕн те районти шалти ĕçсен пайне пымалла пулĕ. Çавăнпа та саккун сакки сарлака тенине асрах тытасчĕ.

Ял çыннисемпе йĕркеленĕ тĕл пулăва ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Л.Г. Ковалева уçрĕ. Çулталăк хушшинче пурнăçланă ĕçсемпе паллаштарчĕ. Малашне татса памалли ыйтусем çинче чарăнчĕ. Вырăнти чылай ыйтăва татса парассинче депутатсем пысăк вăй пулса тăраççĕ, вĕсемпе тачă çыхăнура ĕçлеççĕ.

Ял тăрăхĕнчи Тойкилтĕ-Кĕртекасси-Çĕньял Апаш автоçула хута яни – пысăк ĕçсенчен пĕри. Çак ĕçе пурнăçлама 750 пин тенкĕ укçа тăкаклана. Чуманкасси ялĕ çывăхне пыракан çула та тума пуçланăпа пĕрех ĕнтĕ. Исетерккĕ ялĕнчи çул та «икĕ аллине» тăссах ĕç пуçăнасса кĕтет. Сăмах май, çакăн валли проект тума пуçланă.

Ял тăрăхĕнче вут-çулăм алхаснă 2 тĕслĕх палăртнă. Çакă пушар машинин ĕçне йĕркелеменнипе çыхăннă. Пухура вара çак ĕç çине тимлĕрех пăхма, машинăсене юсавлă тытса тăма 2 ял хуçалăх предприятине шанса пачĕç.

Ку тăрăхри Чапаев тата Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăхсем малалла туртăнни, çур акине хатĕрленме пуçлани сисĕнет.

Ĕç-хĕле тишкернĕ май, Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăха çĕнĕ вăй варкăшĕ çитни курăнать. Пур кăтарту та самай çӳлелле çĕкленме ĕлкĕрнĕ.

Çавăн пекех район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов вырăнти вĕрентӳ, медицина, культура учрежденийĕсен лару-тăрăвне хак пачĕ тата ытти ыйтусем çинче чарăнчĕ.

Р. ИЛЛАРИОНОВА.

Сăн ӳкерчĕкре: ял тăрăхĕн пуçлăхĕ тĕслĕх библиотекăпа паллаштарать.

Ĕçре пултаруллисем

Вĕрентекен те, юлташ та

Вĕрентекен ĕçĕ сăваплă пулнине кашниех пĕлет. Шкул партти хушшинче ларакан ачасем те ӳссен учитель ĕçне алла илессине час-часах ĕмĕтленеççĕ. Çĕньял Хуракасси ялĕнче çуралса ӳснĕ Елена Львовна Смирнован чĕрине те вĕрентекен ĕçĕ кĕçĕн классенче ăс пухнă вăхăтрах тыткăнланă. Ӳйрăмах ăшă кăмăллă, ачасен хуйхи-суйхине тата савăнăçне ăнланакан юратнă вĕрентекенне Т.Т. Донскована сăнама кăмăллана хĕрача.

Ӳснĕ май вырăс чĕлхипе тата литературипе кăсăкланма тытăннă Лена. Сехечĕ-сехечĕпе пур ĕç пирки манса вырăс классикĕсен хайлавĕсене вулама пултарнă. Çапла вара ача чухнех хăш профессие алла илессине пĕлнĕ вăл.

1984 çулта шкултан вĕренсе тухсан тӳрех наука гранитне «кăшлама» васкаман Елена Львовна. Чуманкассинчи вăтам шкулта пионервожатăйра ĕçлеме тытăннă. Малтанхи утăмсене пусма çăмăл пулман пулĕ. Пур пĕр йывăрлăхсене парăнман хĕр. Часах ачасемпе туслашнă, пĕрпĕрне ăнланма тата пулăшма тытăннă. Пĕрле тĕрлĕ ăмăрту, вăйă, уяв ирттернĕ.

Тепĕр çулхине И.Я. Яковлев ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче куçăмсăр мелпе вĕренме пуçланă.

1986-1989 çулсенче Муркашри вăтам шкулта тăрмашнă Е. Смирнова. Вĕренекенсем «çĕнĕ» пионервожатăя хапăлласах йышăннă, кашни мероприятие пĕрле хатĕрленме тытăннă. Темиçе çул çеç аслă Елена Львовна вĕсемшĕн тус шутĕнчех пулнă. Çак шкултах вăй хуракан Л.С. Игнатьевăпа Г.Л. Сидюшкина, В.А. Александров çамрăк специалиста хавалантарнă. Халĕ, çулсем иртсен, Е. Смирнова çак вĕрентекенсене тĕттĕмлĕхе сирекен, хăй патне чĕнекен маякпа танлаштарать. Ара, вĕсен пур уява та хаваслăрах ирттерме сĕннĕ канашĕсене паянхи кун та асрах тытать-çке вăл.

Хăй вĕреннĕ Çатракасси шкулĕнче вăй хума тытăннăранпа кăçал 18 çул çитрĕ ĕнтĕ. Малтанах пионервожатăй, 1992 çулхине вара çак ĕçпе пĕрлех вырăс чĕлхипе литературине вĕрентме тытăнать. Юлашки çулсенче вĕрентекен ĕçне çеç пурнăçлать вăл. Çак вăхăтра класс ертӳçин тивĕçĕсене те тунă. 1998, 2003 çулсенче Елена Львовна ертсе пынă классем пĕрре мар алла диплом илнĕ.

Çулсем иртеççĕ... Темиçе çул каялла парта хушшинче ларнă ачасем хĕсмете каяççĕ: аслă пĕлӳ илеççĕ, мăшăрланаççĕ. «Ирĕклĕ ишевре» ĕнтĕ вĕсем, анчах пур пĕр юратнă вĕрентекене манмаççĕ. Пурнăçра тĕл пулакан йывăрлăхсене, савăнăçлă самантсене пĕлтерсех тăраççĕ. Уявсенче саламлаççĕ, хăнана килеççĕ, кашни тĕл пулмассерен шкулта иртнĕ кунсене аса илеççĕ. Елена Львовна ертсе пынă классем çеç мар, вăл вĕрентнĕ ачасем те ырăпа кăна асăнаççĕ ăна.

Е. Смирнован арчинче хисеп, Тав хучĕсем чылай пулнине те асăнмалла. Ахальтен мар кăмăллана ĕçне чунтан пурнăçлать-çке вĕрентекен. Кашни ача патнех «уçă» тупма пултрать вăл. Вĕсен кăмăлĕ мĕнле пулнине те самантрах калайрать. «Япăх вĕренекен ачана нумай ятлани юсанма пулăшмасть. Манăн пĕр вĕренекен сочиненисене вăхăтра çырмарĕ, каникула каяс умĕн унăн çырман 4 сочинени таранах пухăнчĕ. Эпĕ ăна шаннине, вăл лайăхланма пултарнине ĕнентерме тăрăшрăм. Каникул вăхăтĕнче шăнкăравларĕ хайхи. Сочиненисене çырнă иккен. Ачасем çын ырă е усал кăмăллă пулнине туяççĕ. Ырăна хирĕç каймаççех вĕсем. Ыйтнине пурнăçлаççĕ. Паллах, хăш-пĕр чухне эсĕ ырă кăмăллă пулнипе усă кураççĕ те», - пĕлтерет пултаруллă вĕрентекен.

Халĕ Е. Смирнова - 8-мĕш класс ертӳçи. Çак класра вĕренекен ачасем хăйсене тĕллĕн питĕ тĕплĕн ĕçлеме пултараççĕ иккен. Мероприятисене хăйсемех хатĕрленеççĕ, сценари çыраççĕ, рольсене пайлаççĕ, стенхаçат кăлараççĕ. Тĕрлĕ кружока хаваспах çӳреççĕ. Кунта юрлакансем те, артистсем те, спортсменсем те, ал ăстисем те пур. Шкул, район, республика шайĕнче иртекен ăмăртусене хутшăнаççĕ, малти вырăнсене çĕнсе илеççĕ.

«Уйрăмах Алексей Семенов пирки асăнас килет. Шкулта лайăх вĕреннипе пĕрлех олимпиадăсенчен, ăмăртусенчен юлмасть. Акă, математика олимпиадине, тĕрлĕ халăх хушшинче иртнĕ вăйă-ăмăртусене («Русский медвежонок», «Кенгуру», «Чувашская ласточка») хутшăнать. Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕн стипендине илме тивĕç пулчĕ», - хавхаланса пĕлтерет класс ертӳçи.

Пионервожатăйра ĕçлени класс ертӳçин тилхепине тытса пыма пулăшнине асăнать Елена Львовна. Çавăнпа ĕнтĕ 8-мĕш класс ачисем туслă, пĕр-пĕрне пулăшсах пыраççĕ. Мероприятисем те хаваслă, вĕренекенсене тĕрлĕ енлĕ аталанма пулăшаççĕ.

Çакна та асăнмалла. Шкул, район шайĕнчи ăмăртусене вĕренекенсем çеç мар, Е. Смирнова хăй те тăтăшах хутшăнать. Акă, 1997 çул районта иртнĕ «Вожатый года» ăмăртура вăл хăйне кăтартма пултарчĕ, 3-мĕш вырăн йышăнчĕ.

Т. МИХАЙЛОВА.

Хаçат урлă вĕренетпĕр

Компьютер чăвашла каласлăр

Хальхи вăхăтра компьютерпа чылайăшĕ усă курма пултарать. Питĕ меллĕ-çке компьютерпа тĕрлĕ ĕçсем туса ирттерме! Пичет ĕçĕсем пирки калама та кирлĕ мар. Хăть вырăсла пичетле, хăть акăлчанла, хăть чăвашла. Интернетра та чăвашла материалсем туп-туллиех.

Анчах та çакăнта чăвашла шрифтсемпе пичетлеме нумайăшĕ пĕлменни курăнать. Электронлă почтăпа килекен материалсенче те чăвашла шрифтпа çырни вырăнне тĕрлĕрен калягă-малягăсем тухаççĕ. Теприсем малтан вырăсла пичетлеççĕ те кайран хура чернилпа чăвашла хӳресем çырса хураççĕ. Илемлĕ те мар, вăхăчĕ те усăсăр иртет. Çакăн пекки те пулкалать: пĕр компьютерпа çырнă чăвашла статьясем тепĕр компьютер çинче тухмаççĕ. Çавăнпа та çак статьяра хамăн компьютерпа чăвашла пичетлес опытпа паллаштарас килет.

Пĕрремĕш меслет. Интернетра тĕрлĕрен чăвашла шрифтсем туп-туллиех. Хăвăн компьютер çине куçарса илмелле çеç.

Иккĕмĕш меслет. Специалистсем йĕркеленĕ чăвашла çырнă шрифтсене юлташсенчен çырса илме пулать.

Виççĕмĕш меслет. Санăн Интернета кĕме майсем çукрах пулсан е юлташсен чăваш шрифчĕсем çук пулсан, чăваш шрифчĕсене хăвах компьютера лартма пултаратăн.

Мĕн тумалла-ха?

1. Компьютера ямалла.

2. «Рабочий стол» çинчи «Microsoft Office Word» значока пусмалла. Çыру çырмалли «Документ» ятлă страница уçăлать.

3. Уçăлнă «Документ» çинче «Вставка» значок çине пусмалла. Унта «Символ» значок тухать. Ун çине пуссан «Символ» таблица тухать.

4. Çак таблицăра хăвна килĕшекен шрифтра кирлĕ чăвашла буквăна тупатăр. Калăпăр, пĕчĕк «ç» буквăна. Таблицăри çав буква çине пусмалла.

5. Таблица çинчи «Сочетание клавиш» значок çине пусмалла. «Настройка клавиатуры» ятлă таблица тухать.

6. Пĕчĕк чăвашла буквăсем пичетлеме клавиатура çине «Alt» значокпа «С» буква çине пĕр вăхăтра пусмалла.

7. «Сочетание клавиш» таблица çинче «Назначить» значок çине пусмалла, унтан «Закрыть» значок çине пусмалла.

8. Малалла хăвăра кирлĕ пĕчĕк «ă», «ĕ», «ӳ» буквăсене те çак меслетсемпе компьютер çине вырнаçтарса тухмалла.

Çак утăмсене пурнăçланă хыççăн кирек епле шрифтпа пичетленĕ чух та клавиатура çине «Alt» значокпа «С» буква çине пĕр вăхăтра пуссан чăвашла пĕчĕк «ç» буква пичетленет, «Alt» значокпа «А» буква çине пĕр вăхăтра пуссан чăвашла пĕчĕк «ă» буква пичетленет тата ытти те.

Пысăк чăваш буквисене те çавăн пекех вырнаçтармалла.

1. «Рабочий стол» çинчи «Microsoft Office Word» значока пусмалла. Çыру çырмалли «Документ» ятлă страница уçăлать.

2. Уçăлнă «Документ» çинче «Вставка» значок çине пусмалла. Унта «Символ» значок тухать. Ун çине пуссан «Символ» таблица тухать».

3. Çак таблицăра хăвна килĕшекен шрифтра кирлĕ чăвашла буквăна тупатăр. Калăпăр, пысăк «А» буквăна. Таблицăри çав буква çине пусмалла.

4. Таблица çинчи «Сочетание клавиш» значок çине пусмалла. «Настройка клавиатуры» ятлă таблица тухать.

5. Пысăк чăвашла буквăсем пичетлеме клавиатура çине «Ctrl» значокпа «А» буква çине пĕр вăхăтра пусмалла.

6. «Сочетание клавиш» таблица çинче «Назначить» значок çине пусмалла, унтан «Закрыть» значок çине пусмалла.

7. Малалла хăвăра кирлĕ пысăк «Ç», «Ĕ», «Ӳ» буквăсене те çак меслетсемпе компьютер çине вырнаçтарса тухмалла.

Çак утăмсене пурнăçланă хыççăн кирек епле шрифтпа пичетленĕ чух та клавиатура çине «Ctrl» значокпа «А» буква çине пĕр вăхăтра пуссан чăвашла пысăк «А» буква пичетленет, «Ctrl» значокпа «Е» буква çине пĕр вăхăтра пуссан чăвашла пысăк «Ĕ» буква пичетленет тата ытти те.

Юлашкинчен пурне те компьютерпа пĕр чăрмавсăр чăвашла пичетлеме чĕнетĕп.

Тарас ТАРАСОВ.

Муркаш шкулĕ.